**Çеçпĕл**

Çыртан Атăла тинкеретĕп
Туясшăн асамлă вăйне
Мăнаçлă та Атăл, хитре те –
Часах ăнланаймăн чунне:

Мĕскер уншăн пурнăç е вилĕм,
Çынсем кăмăллана тĕнче?
Кама ун халалĕ, пехилĕ,
Кам çăлтăрĕ ун аллинче?

Пĕлместĕп. Тепри те пĕлмест пуль...
Хурав-мĕн пулмарĕ хумран...
Сасартăк – ĕненĕр-ши?! – Çеçпĕл
Хуллен утса иртрĕ умран.

Тăрать...
Гимнастерка та атă...
Шинель уртса янă çийне.
Сăн-пичĕ те çамрăк, те ватă...
Пăхать анлă Атăл çине.

Çӳçенчĕ, сывларĕ те ассăн.
Вара, хумсене чарасла,
Вĕсен ытамне ыткăнаслăн
Вăл тайăлчĕ кăшт малалла.

Мăн кăмăллă Атăл та акă
Хăйпе тан тĕнче курнăнах
Пĕр çиçрĕ те симĕс-кăвакăн
Шавларĕ, кĕрлерĕ вăрах.

Ун кăпăклă кăкăрĕ тăрăх
Вут-кайăк хăпарнăн вĕçсе
Хаваслăх янравĕ пек тăрă
Çĕкленчĕç çунатлă хумсем.

Туйри каччăсем пек, сатуррăн
Çилсем шăхăрашрĕç: ши-ши! –
Кĕрлерĕ пин сасăллă юрă,
Саланчĕ тăван çĕр шăрши!

Эп Çеçпĕл куçне асăрхарăм:
Мăн Атăл капланнăн çырта,

Пăлхавлă та вĕçĕмсĕр тарăн
Хăват хумханатчĕ унта.

Хăйпе хăй сыпса пĕрлештернĕн
Çĕре те сенкер пĕлĕте,
Тăрать вăл телейлĕн те тертлĕн
Манран инçех мар та – çӳлте!

Ун çирĕп сăнарĕ, ӳт-пĕвĕ
Материлĕхне çухатса
Хальччен çын илтмен вăйлă кĕввĕн
Çунтарчĕ чуна та ăса...

Эп ӳкрĕм. Ăша тем вăркатрĕ,
Сăпка пек лăпкарĕ пуça.
Тем вăрттăн тухатрĕ, çывратрĕ.
Вăратрĕ те – уçрăм куçа:

Юмах пек юхать анлă Атăл...
Çапаççĕ хумсем çырана
«Ан парăн, тăванăм, ан ватăл», –
Тесе калас тенĕн мана.

*Айташ, Ю. Çеспĕл / Ю. Айташ // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 403.*